26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
ЯНВАРЬ
11
ЫТЛАРИКУН
8(6503) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Çуракине тĕплĕн хатĕрленер, кăтартуллăн ирттерер!

ВКП(б) Обкомĕн çак кунсенче пулса иртнĕ XVII-мĕш пленумĕ 1943-мĕш ялхуçалăх çулĕн итогĕсемпе çитес çуракине хатĕрленес задачăсем çинчен Чăваш АССР Совнарком Председателĕн А. М. Матвеев юлташăн докладне сӳтсе-яврĕ.

Вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене çĕнтерсе, пирĕн республикăри колхозсем 1943 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсене халиччен-хинчен организованăрах туса ирттерчĕç. Тырпулсене уйхиртен пухса кĕртес ĕçе вăрçăчченхи 1940 çулхинчен пĕр уйăх маларах вĕçленĕ, октябрĕн 26-мĕшĕ тĕлне авăн çапса пĕтернĕ. Пирĕн тăван республика государствăна срокчен чылай малтан тырă парса татрĕ, 1944 çулхи натуроплата шучĕпе тата Хĕрлĕ Çар фондне 105.000 пăт тырă парса хучĕ.

Сталин юлташ Октябрьти социализмлă аслă революци 26 çул тултарни çинчен тунă хăйĕн историллĕ докладĕнче колхоз хресченĕсен ĕçне пысăка хурса хаклани республикăри колхозсене, колхозниксемпе колхозницăсене патриотла çĕнĕ ĕç тума—ытлашши тырра государствăна сутма хаваслантарчĕ. Пирĕн колхозсемпе колхозниксем кĕске вăхăт хушшинчех государствăна 2.500.000 пăт ытла тырă сутрĕç, ăна çийĕнчех хатĕрлев пункчĕсене леçсе пачĕç.

Ялхуçалăх ĕçĕсене вăхăтра ĕлкĕрсе пырас, кĕрхи тырăсем акас тата государство умĕнчи парăмсене татас тĕлĕшпе Вăрнар, Етĕрне, Вăрмар, Шупашкар, Елчĕк, Сĕнтĕрвăрри, Калинино тата Шăхасан районĕсенчи колхозсем уйрăмах лайăх ĕçлерĕç. Йĕпреç, Шăхасан, Вăрнар, МТС-ĕсем тракторпа тумалли ĕçсен планне ăнăçлăн тултарчĕç.

Пленум çакăнпа пĕрлех Пăрачкав, Шăмăршă, Чкаловски, Кувакино, Первомайски тата Улатăр районĕсенчи колхозсем 1943-мĕш çулти ялхуçалăх ĕçĕсене çителĕксĕр туса пынине, государство умĕнчи обязательствăсене начар пурнăçланине палăртрĕ. Çак районсем юлса пынăасси вăл унти çĕрĕç, совет тата парти органĕсем çителĕксĕр ĕçленинчен килнĕ. Çак районсенчи руководительсем калчасене кирлĕ пек пăхса çитĕнтерейменя, колхозсене тырпула пухса кĕртме начар хатĕрленĕ. Вăл районсенче, кашни лашапа ытти районсенчинчен ытларах ĕçе тумаллине кура тăркаçах, колхозсемпе колхозниксен майракаллă шултăра выльăхĕсене ĕçе вĕрентсе усă курман, ялхуçалăх ĕçĕсене пурнăçа кĕртес ĕçре майсемпе пуринпе те усă курман. Çавна пула унти чылай колхозсем начар тухăçлă тырпул туса илнĕ, уборка вăхăтĕнче тырпула тăккаланă тата государство умĕнчи обязательствăсене пурнăçламан.

Шăмăршă, Пăрачкав, Кувакино районĕсем, ВКП(б) Обкомĕпе республика Совнаркомĕ пулăшса тăнă пулин те, 1943 çулта ĕçре юлса пырассине пĕтерейменя. Çак районсен руководителĕсем хăйсем ĕçе начар йĕркелесе пыраççĕ, ĕçсене мĕнле пурнăçа кĕртмеллине тавçăрса илеймесĕр, ытти çĕртен пырса пулăшасса кĕтсе пурăнаççĕ.

Вĕсем час-часах вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсем çине йăвантараççĕ. Анчах çав йывăрлăхсем вăл районсенче кăна-и мĕн? Колхозсен ĕçне лайăхлатас тесен тата вĕсене организацилĕх енчен тĕреклетес тесен, Кувакино тата Пăрачкав районĕсенчи чылай колхозсене вăхăтра пĕчĕклетсе йĕркелемелле пулнă.

Çак районсенче малашне ялсенчи пуçламĕш парторганизацисене ертсе пырассине вăйлатас пулать, партилле-организациллĕ тата партиллĕ-политикăллă ĕçсене вăйлатас пулать.

Уйхир ĕçĕсене чылай иртерех туса пĕтернĕ пулин те, республикăри колхозсем çитес çуракине çителĕксĕр хатĕрленеççĕ-ха. Чылай районсенче вăрлăх хывса çитермен, ăна тасатса лабораторисенче тĕрĕслес ĕçе начар йĕркеленĕ. Пленум вăрлăх хатĕрлес тĕлĕшпе уйрăмах Шăмăршă, Пăрачкав, Чкаловски, Комсомольски, Хĕрлĕ Чутай, Кувакино тата Канаш районĕсем начар ĕçленине палăртрĕ. Пленум парти райкомĕсемпе райисполкомсене тата çĕрĕç органĕсене вăрлăхсем хывас, вĕсене çураки валли хатĕрлес ĕçсене хăвăртрах вĕçлеме хушрĕ. Вăрлăх хывас, ăна лабораторисенче малтанхи хут тĕрĕслес ĕçе январĕн 20-мĕшĕнчен кая юлмасăр туса пĕтермелле.

Отечественнăй вăрçă çулĕсенче районсенче пусуçаврăнăшне пăсни, нумай çул ӳсекен курăксем акмалли çĕр лаптăкне—клеверпа люцерна акмалли çĕр лаптăкне—çултан çул чакарса пыни палăрчĕ. Пусуçаврăнăшне пăсни тата нумай çул хушши ӳсекен курăксем акас ĕçе хакламанни тырпул тухăçлăхне хăпартмалли никĕсе хавшатать, выльăх-чĕрлĕх апачĕн базине тăвас ĕçре чăрмав кӳрет. Ку çитменлĕхе малашне нимпе те тӳсме çук.

Пленум Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатне (халăх комиссарĕ Малов юлташ) хăйĕн ĕçне сӳрĕккĕн çĕнетсе йĕркеленĕшĕн тата юлса пыракан районсемпе МТС-сене çителĕксĕр пулăшса пынăшăн çивĕччĕн критиклерĕ.

Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ колхозсенче агротехникăллă мероприятисене пурнăçлас ĕçе çителĕксĕр ертсе пырать. Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн отделĕсемпе управленийĕсем райçĕрĕç пайĕсене ку енĕпе сахал пулăшаççĕ, ялхуçалăхне ертсе пырас ĕçре çĕрĕç пайĕсен вырăнне ӳстерме тăрăшмаççĕ.

Республикăри машинăпа-тракторнăй станцисем тракторсене юсамалли 1943 çулхи IV-мĕш кварталти плана пурнăçларĕç. Анчах ку ĕçе Улатăр, Кувакино тата Пăрачкав МТС-ĕсем çителĕксĕр йĕркеленĕ. Колхозсенче ялхуçалăх инвентарĕпе транспорт япалисене юсас ĕç сӳрĕккĕн пулса пырать.

Республикăри нумай предприятисем (Челноков юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен завод, Çĕмĕрле комбиначĕ тата ыттисем те) МТС-сем валли запаслă пайсем туса хатĕрлемелли плана начар пурнăçласа пыраççĕ.

ВКП(б) райкомĕсемпе райисполкомсем тата çĕрĕç органĕсем лашасене уйхир ĕçĕсем валли хатĕрлесси çине çителĕксĕр çавăрăнса пăхаççĕ.

Çĕрулми вăрлăхĕ хатĕрлес ĕçе тимлĕн тумалла. Çимелли тата фуражлăх çĕрулмин тăррине вăрлăх валли касса хатĕрлес ĕçе республикăри пур колхозсенче те, подсобнăй хуçалăхсемпе апат-çимĕç предприятийĕсенче те анлăн туса пымалла.

ВКП(б) Обкомĕн пленумĕ парти райкомĕсене, райисполкомсене 1943-мĕш ялхуçалăх çулĕн итогĕсене хăйсен ларăвĕсенче сӳтсе явма, колхозсемпе МТС-сенче тата совхозсенче—колхозниксен, МТС-семпе совхозсенчи рабочисемпе служащисен пухăвĕсенче сӳтсе-явма хушрĕ. Çав ларусемпе пухусенче кашни колхозăн, бригадăн тата звенон ĕçне тишкерсе тухса хакламалла, ĕçри çитменлĕхсемпе йăнăшсене палăртмалла, çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе конкретнăй ĕçсем палăртмалла.

Пленум Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, парти райкомĕсене тата райисполкомсене хĕллехи агротехника ĕçĕсене пĕр сăмахсăр пурнăçа кĕртмелле тума хушрĕ. Кашни колхозах тата уйхир бригадипе звенона тислĕк, торф тата ытти удобренисем хатĕрлесе турттармалли пиллĕккунлăх заданисем памалла. Çак ĕçсене тума колхозри мĕнпур лашасен хисепĕн 30 процентĕнчен кая мар уйăрмалла, çавăн пекех ĕçе вĕрентнĕ вăкăрсемпе те туллин усă курмалла. Пленум йышăннă тăрăх, январĕн 15-мĕшĕпе февралĕн 15-мĕшĕ хушшинче республикăра вырăнти удобренисем хатĕрлесе турттармалли уйăхлăх пулса иртет.

Çак çывăх кунсенчех республикăри мĕнпур колхозсен производство бригадисене йĕркелесе çитермелле. Çав бригадăсене çĕр участокĕсем, инвентарь тата турттăм вăйĕ çирĕплетсе памалла. Ĕç нормисене тепĕр хут пăхса тухмалла, вĕсене колхозниксен пухăвĕсенче çирĕплетмелле. Çулталăкри производство планĕсене, çавăн пекех çураки планне февралĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр туса пĕтерес пулать.

Вăрнар районĕнчи гектартан çĕр пăт тырă туса илнĕ комсомолецсен пуçарăвне ырласа, пленум парти райкомĕсене çак ĕçе тӳрремĕнех контрольлесе тăма, ку ĕçе тума ВЛКСМ райкомĕсене куллен хĕтĕртсе пыма, гектартан çĕр пăт тырă илессишĕн пуçланнă социализмлă ăмăртăва анлăн организацилеме хушрĕ.

Çураки çывхарнăçемĕн çывхарать. Çуракине хатĕрленес ĕçĕн ăнăçлăхĕ партипе комсомол организацийĕсем ĕçри çитменлĕхсене хăвăрт пĕтернинчен килет. Çавăнпа ВКП(б) райкомĕсен партипе комсомол пуçламĕш организацийĕсене ку ĕçре пулăшса пымалла, вĕсене колхоз производствине тĕрĕс ертсе пыма куллен вĕрентсе пымалла.

ВКП(б) Обкомĕн решенийĕсене пурнăçласа, кăçал фронтпа çĕршыв валли татах та ытларах апат-çимĕç туса парассишĕн, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура мала тухассишĕн тата Оборонăн Государственнăй Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне илессишĕн пĕтĕм вăя хурса кĕрешер!

Совет Информаци Бюровĕнчен

ЯНВАРĔН 8-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Январĕн 8-мĕшĕнче УКРАИНĂРИ 1-МĔШ фронт çарĕсем, наступлени туса пырса, Винница облаçĕнчи ИЛЬИНЦЫ ятлă район центрне тытса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 60 пункта ытла çапăçса йышăнса илнĕ, çав шутра—ВИРЫ, ЛЕНЧИ, ЧУДЕЛЬ, РУДНЯ-БОРОВСКАЯ, СИВКИ, БЕЛЬЧАКИ, НОВАЯ ЧАРТОРИЯ, КОРОСТКИ, ЛИПНО, МИХАЙЛОВКА, КРАСНОСЕЛКА, РАЙГОРОДОК, ОБУХОВКА, МАРКУШИ, НОВАЯ ГРЕБЛЯ, КОШЛАНЫ, ЛУКАШОВКА, ШУЛЯКИ, ПУГАЧЕВКА, ЖИТНИКИ, ОЛЬШАНКА, МАРЕЙКА, СОРОКАТЯГИ, ТЕТЕРЕВКА, КРАСИЛОВКА, СТАНИСЛАВЧИК, ЧАПАЕВКА, ПЕРЕСЕЛЕНИЕ, КАГАРЛЫКСКАЯ СЛОБОДА, ВЕЛИКИЕ ПРИЦКИ ятлă пысăк ялсене тата СТРАШОВ, БРОДЕЦКОЕ, ГЛЕНДРЫ ятлă чугун çул станцийĕсене йышăнса илнĕ.

УКРАИНĂРИ 2-МĔШ фронт çарĕсем, çавăрса илмелли лайăх маневр туса, январĕн 8-мĕшĕнче Украинăри пысăк область центрĕпе промышленность центрĕ пулса тăракан КИРОВОГРАД хулине тытса илнĕ, çавăн пекех тата 80 яла ытла çапăçса йышăнса илнĕ, çав шутран—ВЫСШИЕ ВЕРЕЩАКИ, НИЗШИЕ ВЕРЕЩАКИ, СОСНОВКА, ТАРАСОВКА, БУКВАРКА, УЛЬЯНОВКА, ПОКЛИКТАРОВКА, МЕЛЕКОВКА, АЛЕКСАНДРОВКА, БЕЗВОДНАЯ, МАРОВКА, ЗЕЛЕНАЯ, ВОРОШИЛОВКА, ГУБОВКА ятлă пысăк ялсене.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă тата артиллерипе минометсенчен персе тăнă.

Январĕн 7-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 74 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 28 самолетне персе ӳкернĕ.

ЯНВАРĔН 9-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

УКРАИНĂРИ 1-МĔШ фронт çарĕсем малалла тапăнса пынă, Каменец-Подольск облаçĕнчи район центрне—ПОЛОННОЕ хулипе пысăк чугун çул станцине, Киев облаçĕнчи БУКИ тата КАГАРЛЫК ятлă район центрĕсене тытса илнĕ, çавăн пекех тата 70 ял ытла йышăнса илнĕ, çав шутра—СУЕМЦЫ, СЕРЕДНЯ, ДЕРТКА, ТИРАНОВКА, КОГЕЛЯНКА, СТАРАЯ ЧАРТОРИЯ, ТРОЩА, ПОМЛИНЦЫ, СЧАСТЛИВАЯ, АЛЕКСАНДРОВКА, ОБОДНОЕ, ВОЛОВОДОВКА, ЖОРНИЩЕ, БАЛАБАНОВКА, КОРЫТНА, КНЯЖЕ-КРЫНЬШЕ, ИВАХНЫ, БУЗОВКА, ВОРОНОЕ, ХИЖНА, КРАСНЫЙ, ПАВЛОВКА, ВОТИЛЕВКА, ТЕЛЕШОВКА, ВИНЦЕТОВКА, ПИВЦЫ, ЛИПОВЫЙ РОГ ятлă пысăк ялсене.

УКРАИНĂРИ 2-МĔШ фронт çарĕсем малаллах куçса пынă, Кировоград облаçĕнчи АЛЕКСАНДРОВКА ятлă район центрне тытса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 40 пункта ытла йышăнса илнĕ, çав шутра—ЧУБОВКА, КУЛИКОВКА, ЛУБЕНЦЫ, ЗАМЯТНИЦА, МЕДВЕДОВКА, МЕЛЬНИКИ, ГОЛОВКОВКА, ЯНОВКА, ИВАНГОРОД, БОЛТЫШКА, ГОЛИКОВО, ЕРАЗМОВКА, КРЫМКИ, НОВОПАВЛОВКА, ИВАНОВКА, КАРЛОВКА, АННИНСКА ятлă ялсене тата ФУНДУКЛЕЕВКА ятлă чугун çул станцине.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă, артиллерипе минометсенчен персе тăнă, темиçе пунктра тĕлĕ-тĕлĕпе çапăçнă.

Январĕн 8-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 62 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 57 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Украинăри 1-мĕш фронт çарĕсем çаплах наступлени туса пынă. Пĕр соединени чаçĕсем хаяррăн çапăçнă хыççăн Каменец-Подольск облаçĕнчи Полонное хулипе пысăк чугун çул станцине тытса илнĕ. Тепĕр районра тăшманăн пехотипе танкĕсем тата хăй тĕллĕн çӳрекен туписем контратака тунă. Пехота хушшинче кĕрешекен совет артиллерисчĕсем вăйлăн персе тăшманăн 18 танкне, хăй тĕллĕн çӳрекен 6 тупине персе çĕмĕрнĕ. Нимĕçсем çыхланса ӳкнипе усă курса, совет танкĕсемпе пехоти тăшмана сасартăк пырса çапнă та темиçе ял тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче нимĕçсен 800 салтакĕпе офицерĕ вилсе юлнă. Пирĕннисем трофейăсем тытса илнĕ, вĕсем хушшинче хăй тĕллĕн çӳрекен 4 тупă тата 9 бронетранспортер пур. Киевран кăнтăртарахра пирĕн çарсем гитлеровецсем хирĕç тăнине çĕнтерсе темиçе ял тытса илнĕ, çав шутра — Киев облаçĕнчи Буки тата Кагарлык ятлă район центрĕсем. Çапăçусенче тăшман çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухату тӳсет.

Совет авиацийĕ çĕр çинчи çарсене активлăн пулăшса пынă. Сывлăшри çапăçусенче пирĕн летчиксем тăшманăн 8 самолетне персе ӳкернĕ. Кунсăр пуçне, пирĕн авиаци Винница аэродромне тапăннă чухне нимĕçсен 13 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн истребительсем нимĕçсен «Фокке-Вульф—196» самолетне совет аэродромĕ çине вăйпа антарса лартнă.

* * *

Украинăри 2-мĕш фронт çарĕсем, Кировоград хулине тытса илсен, малалла тапăнса пынă. Паян пирĕн çарсем нимĕçсене Кировоград облаçĕнчи Александровка ятлă район центрĕнчен хĕссе кăларнă, çавăн пекех тата ытти 40 яла ытла тăшмантан тасатнă. Пĕр соединени чаçĕсем, малалла куçса пырса, нимĕçсен 1500 салтакĕпе офицерне çиги пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсенчен 3 артиллери батарейи, 70 пулемет, 123 миномет, 60 автомашина тата боеприпассемпе апат-çимĕç усракан темиçе склад тытса илнĕ. Тыткăна илнисем чылай. Тепĕр участокра тăшман, çапăçăва танксемпе пехотăн шултăра вăйĕсене кĕртсе ярса, темиçе хут та контратака тунă. Пирĕн артиллеристсемпе танкистсем тата пехотинецсем гитлеровецсен контратакисене ăнăçлăн сирсе янă, тăшманăн 25 танкне, хăй тĕллĕн çӳрекен 8 тупине пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсене хăвăрăн ярсан, совет чаçĕсем çĕнĕрен наступлени пуçласа янă та ăнăçлăн малалла куçса пынă.

* * *

Ленинград облаçĕнчи партизансен темиçе отрячĕ декабрĕн 27-мĕшĕпе 31-мĕшĕ хушшинче тăшманăн 30 çар эшелонне тата пĕр бронепоездне ӳпĕнтерсе янă. Крушенисене пула 20 паровоз ытла тата 250 вагонпа платформа таран çĕмĕрĕлнĕ. Совет патриочĕсем çав вăхăт хушшинчех нимĕçсен боеприпассем усракан 5 складне тата апат-çимĕç усракан 2 складне вут тивертнĕ, 38 автомашинине сирпĕнтерсе янă. Партизансем 17 гитлеровеца, çав шутра пĕр майора, тыткăна илнĕ. Январĕн 1-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пĕр отрядри партизансем тăшман гарнизонне тапăннă та 85 гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ. 40 çынна, çав шутра темиçе испанеца, тыткăна илнĕ.

* * *

Украинăри 1-мĕш фронтра нимĕçсен 208-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 338-мĕш полкăн 130 салтакĕпе офицерĕ тыткăна парăннă. Иккĕмĕш батальонăн командирĕ обер-лейтенант Альберт Бергман çапла каласа панă: «Пирĕн дивизи пысăк çухатусем тӳсрĕ. Унта мĕн пурĕ те 550 салтакпа офицер çеç тăрса юлчĕ. Çине тăрса темиçе хут та ыйтнă пулин те, дивизие çынсем хушса памарĕç. Вырăссем пирĕн оборонăна татсан, дивизи командирĕ каялла чакма приказ пачĕ. Вырăс танкĕсем пире хыçранах хăваласа пычĕç. Салтаксем нумайĕшĕ тарса саланчĕç. Пĕр ял патĕнче эпĕ 130 çын пухрăм та вĕсене тыткăна парăнма хушрăм. Эпĕ çакна пĕр иккеленмесĕрех турăм, мĕншĕн тесен малалла хирĕç тăни ăссăр ĕç çеç мар, хамăн салтаксем умĕнче преступлени туни пулать тесе шутларăм. Германия çак вăрçăра çĕнтерейрес çуккине ăнланман ăссăр командовани йăнăшĕсемшĕн салтаксемпе офицерсен вилсе выртмалла мар. Манпа пĕрле пулнă салтаксем кăна мар, офицерсем те манăн приказа ырларĕç. Темиçе минометпа тупа тата пулеметсемпе винтовкăсене эпир пĕр пăсмасăр вырăс офицерĕсене патăмăр».

* * *

Гомель облаçĕнчи Шиловичи тата Шерихов ятлă ялсене оккупациленĕ вăхăтра нимĕç фашисчĕсен ирсĕрĕсем совет мирлĕ çыннисене перепере вĕлернĕ. Вĕсен аллинчен М. Драбушевский, П. Драбушевский, Т. Сосновский, А. Шилович, Г. Сосновский, Г. Хилькевич тата ытти нумай колхозниксем пĕтнĕ. Нимĕçсем хресченсене çаратса тустарнă, темиçе вунă пӳрте çунтарса янă, çитĕннĕ арçынсемпе хĕрарăмсене нумайĕшне ирĕксĕрлесе каторгăна хăваласа кайнă.

Совет Союзĕн Геройĕ гварди майорĕ М. Е. Ефимов юлташ Шупашкарта

Ĕнер, январĕн 10-мĕшĕнче, Шупашкара Совет Союзĕн Геройĕ гварди майорĕ Мирон Ефимович ЕФИМОВ юлташ килчĕ.

Пирĕн земляк Мирон Ефимов тискер тăшманпа çапăçма малтанхи хут 1941 çулхи июнĕн 26-мĕшĕнче вĕçсе тухнă. Унтанпа унăн ячĕ тăтăшах фронтра илтĕнсе тăрать.

Гварди майорĕ Мирон Ефимович Ефимов командир пулса ертсе пыракан гвардейски полкри летчиксен паттăр ĕçĕсем çĕр çинчи боецсемпе моряксене Севастополе хӳтĕленĕ кунсенче, Кавказри тата Таври çеçенхирĕсенчи хаяр çапăçусенче хавхалантарса пынă.

Сывлăш гвардийĕн командирĕ Совет Союзĕн Геройĕ Мирон Ефимов 300 хутчен ытла боевой вĕçевре пулнă, вĕсенчен 150 штурмовкăра пулнă. Вăл нимĕçсене пĕтĕмпе 17 самолет, 10 танк, 500 автомашина пĕтерсе тăкнă, фашистсен 3000 салтакĕсемпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ.

Сталинла хăюллă сокола Ефимов юлташа ĕнер Советсен Çуртĕнче республикăри партипе правительство руководителĕсем ăшшăн кĕтсе илчĕç. Пирĕн чаплă земляк боецсемпе командирсен фронтри паттăр ĕçĕсем çинчен каласа пачĕ.

Совет Союзĕн Геройĕ Ефимов юлташ тăван республикăра темиçе кун хушши пулать.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Хĕрлĕ Çар соединенийĕсене орденсемпе наградăласси çинчен

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçланăшăн тата çавăн чухне хастарлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн çаксене наградăланă:

ХĔРЛĔ ЯЛАВ ОРДЕНĔПЕ

89-мĕш Гвардейски Белгородски-Харьковски стрелковăй дивизие,

303-мĕш Верхне-Днепровски стрелковăй дивизие,

72-мĕш Гвардейски Красноградски стрелковăй дивизие,

81-мĕш Гвардейски Красноградски стрелковăй дивизие,

57-мĕш Полтавски уйрăм танковăй полка,

115-мĕш Красноградски истребительнăй противотанковăй артиллери полкне.

II-МĔШ СТЕПЕНЬ СУВОРОВ ОРДЕНĔПЕ

110-мĕш Гвардейски Александрийски Хĕрлĕ Ялавлă стрелковăй дивизие,

97-мĕш Гвардейски Полтавски Хĕрлĕ Ялавлă стрелковăй дивизие.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1944 çулхи январĕн 8-мĕшĕ.

Виçĕ аслă державăн историллĕ конференцийĕсем çинчен пичетлесе кăларнă кĕнекесем

Политика литературин государство издательстви „Виçĕ министрăн Мускаври конференцийĕ (1943 çулхи октябрĕн 19-мĕшĕнчен пуçласа 30-мĕшне çитиччен пынă конференцин материалĕсем)» тата «Союзлă виçĕ державăн—Совет Союзĕн, США-н тата Великобританин руководителĕсен Тегеранри конференцийĕ (1943 çулхи ноябрĕн 28-мĕшĕнчен пуçласа декабрĕн 1-мĕшне çитиччен пынă конференцин материалĕсем)» ятлă кĕнекесем пичетлесе кăларнă. Пĕрремĕш кĕнекен пуçламĕшĕнче «Правда» хаçатăн 1943 çулхи ноябрĕн 2-мĕшĕнчи умстатьине пичетленĕ. Çав умстатья Мускаври конференци историре пысăк вырăн йышăнса тănине палăртать. Мускаври конференци мĕнле вырăн йышăнса тăни çинчен тата «Известия» хаçатăн 1943 çулхи ноябрĕн 2-мĕшĕнчи умстатьи те калать. Çав статьясем сĕр пуçне кĕнекере тата çак материалсем пичетленнĕ: виçĕ министрăн Мускаври конференцийĕ çинчен Англин, Совет Союзĕн тата Америкăн представителĕсем пĕрле пĕлтерни, тăвата государство пĕтĕмĕшле хăрушсăрлăх çинчен йышăннă деклараци, Итали пирки йышăннă деклараци, Австри пирки йышăннă деклараци, гитлеровецсем тунă тискер ĕçсемшĕн вĕсем ответлă пулса тăни çинчен „виçĕ державăн—США-н, Совет Союзĕн тата Великобританин руководителĕсем алă пусса кăларнă деклараци.

«Союзлă виçĕ державăн—Совет Союзĕн, США-н тата Великобританин руководителĕсен Тегеранри конференцийĕ» ятлă кĕнекере «Правда» хаçатпа «Известия» хаçатăн 1943 çулхи декабрĕн 7-мĕшĕнче пичетленнĕ умстатьисем, союзлă виçĕ державăн—Совет Союзĕн, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен тата Великобританин руководителĕсен Тегеранри конференцийĕ çинчен ТАСС пĕлтерни, Тегеранра 1943 çулхи декабрĕн 1-мĕшĕнче Рузвельт, Сталин тата Черчилль алă пуснă виçĕ державăн декларацийĕ, виçĕ держава Иран пирки йышăннă деклараци, У. Черчилль господин Сталин юлташа Сталинград валли хисеплĕ хĕç пани çинчен пĕлтерни, И. В. Сталин юлташ Иран шахĕпе Мухаммед Реза Пехлевипе, Иран премьерĕпе А. Сохэйли господинпа калаçни çинчен тата В. М. Молотов юлташ Иран премьерĕпе А. Сохэйли господинпа тата ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕпе М. Саэдпа Тегеранра калаçни çинчен пĕлтернисем. (ТАСС).

КОК-САГЫЗ ПУÇТАРМАЛЛИ МАШИНĂСЕМ

СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ Резина промышленноçĕн Халăх Комиссариачĕпе пĕрле кок-сагыз тымарĕсене пухмалли машина тăвас тĕлĕшпе конкурс туса ирттернĕ. Каучук институчĕн базинче тата ытти чылай колхозсенче сăнаса пăхнă хыççăн «кок-сагыз—уборщик» ятлă машинăна чи лайăххи тесе йышăннă, ăна сталинла премии лауреачĕ Ф. М. Соловей тунă. Çак машинăна тума та, унпа усă курма та çăмăл, ăна пĕчĕк заводсемпе мастерскойсенче те тума пулать. Соловей юлташ шухăшласа кăларнă «кок-сагыз—уборщик» машинăна ахаль плуг çумне кăкарса та ĕçлеме пулать. Машинăна сăнаса пăхни çакна кăтартнă: кок-сагыз тымарĕсене ОЛК-7 плуг çумне çав машинăна майлаштарса лартса ĕçлесен, тăккаланчăк 10 процент чухлĕ чакать тата ĕç вăйĕ пĕр гектар пуçне 60 çын пĕр кун ĕçленĕ чухлĕ сахалтарах кирлĕ пулать.

Ведомствăсем хушшинчи экспериментальнăй комисси çак машинăна нумай туса кăларма сĕннĕ. 1944 çулхи кок-сагыз тымарĕсене пухса кĕме Главсельмаш çак машинăсен пĕрремĕш ушкăнне туса кăларать. (ТАСС).

ПЫСĂК ТУХĂÇЛА ПАХЧА-ÇИМĔÇ ТУСА ИЛНЕШĔН НАГРАДАСЕМ ПАНИ

Рабочисемпе служащисен коллективлă пахчисемпе уйрăм çынсен пахчисенче иртнĕ çулта пысăк тухăçлă пахча-çимĕçпе çĕрулми туса илнĕшĕн ВЦСПС профсоюзсен комитечĕсене тата вĕсен пахча комиссийĕсене грамотăсемпе премисем памалла тунăччĕ. Халь çав грамотăсемпе премисене алла параççĕ. Вĕсене 173 предприятипе учрежденири профорганизацисем илеççĕ.

Кунсăр пуçне, ВЦСПС грамотисене пилĕк профсоюзăн Центральнăй Комитечĕсем илеççĕ. ВЦСПС-ăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне центрти чугун çулсем çинче ĕçлекенсен профсоюзĕн Центральный Комитетне панă. (ТАСС).

ШЕВЧЕНКО ЯЧĔПЕ ТĂРАКАН ТЕАТР ХАРЬКОВА ТАВĂРАННĂ

Январĕн 5-мĕшĕнче Харьков çыннисем Узбекистанран Харькова таврăннă драма театрĕн —украинецсен Харьковри Шевченко ячĕпе тăракан драма театрĕн коллективне кĕтсе илнĕ.

Çав театр Харьков çыннисене аякри тылра 2 çул хушши ĕçленĕ вăхăтра хатĕрленĕ темиçе спектакль кăтартать. (ТАСС)

Çуракине большевикла хатĕрленер

Комсомолецсемпе çамрăксен бригадисем хĕрӳ ĕçре

СОВЕТСКОЕ, январĕн 8-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Кашни гектартан 100 пăт тырă туса илессишĕн ялти çамрăксем хушшинче социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса пырать. Вырăнти удобренисем хатĕрлес тĕлĕшпе эпир 33 колхозра комсомолецсемпе çамрăксен бригадисене организацилерĕмĕр. Вĕсене комсомолăн колхозсенчи пуçламĕш организацийĕсен секретарĕсем ертсе пыраççĕ.

«Ыраш» колхозра ку бригадăна фронтовик Н. Иванов юлташ ертсе пырать. Унта 7 комсомолец. Вĕсем çак хĕлре хире 900 лав тислĕк кăларнă, 14 центнер кĕл, 10 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă, 20 гектар çинче юр тытнă. «Пробуждение» колхозри комсомолецсен бригади (бригадирĕ ВЛКСМ организацин секретарĕ Никандров юлташ) 44 центнер кĕл, 23 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă, хире 1.080 лав тислĕк кăларнă.

Комсомолецсемпе çамрăксен бригадисем, вăйлă тырпулшăн ăмăртăва хутшăнса, чылай пысăк ĕçсем турĕç. Паянхи куна вĕсем 2.821 центнер кĕл, 2.111 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă, хире 1.057 лав тислĕк кăларнă, 1.053 гектар çинче юр тытнă. Колхозсенче икĕ хутчен воскресник туса ирттернĕ. Воскресниксенче комсомолецсемпе çамрăксем 953 центнер кĕл, 15 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă, юр тытнă, хире тислĕк кăларнă тата ытти те.

Комсомолецсемпе колхоз çамрăкĕсем, колхозсенче хăйсен вăйне шеллемесĕр ĕçлесе, ирсĕр тăшмана çĕнтерес сехете çывхартма тăрăшаççĕ.

Р. СЕМЕНОВА,
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

„Искра" колхозра

КАЛИНИНО, январĕн 8-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Иртнĕ çулта «Искра» колхоз юлса пыракан колхозсен шутĕнче пулнă. Нумаях пулмасть колхоз председательне М. Быков юлташа суйларĕç. Быков юлташ малтанхи кунранах ĕçе çĕнетсе ячĕ. Ĕç вăйне тĕрĕс йĕркелерĕ, куллен опытлă колхозниксемпе канашласа ĕçлеме тытăнчĕ.

Ялхуçалăх ĕçĕ çуракинчен пуçланать. Çуракине лайăх хатĕрленни ĕçĕн ăнăçлăхне татса парать. Çакна шута илсе, Быков юлташ çуракине хатĕрленес ĕçе пур колхозниксемпе колхозницăсене те мобилизацилерĕ. Колхоз кĕске вăхăт хушшинчех вăрлăхсене сортласа хучĕ, вĕсен шăтас пахалăхĕ аван. Вăрлăхсене сортлас ĕçре Соловьева, Макарова тата Иванова юлташсем уйрăмах хастарлăн ĕçлерĕç. Плугсемпе машинăсене пĕтĕмпех юсанă. Ут тавраçĕсем пур лаша валли те ытлашшипех хатĕрленĕ. Уя çак кунсенче кăна 1700 лав тислĕк кăларчĕç. Вырăнти удобренисене пухасси те аван пырать. 30 центнер кĕл, 18 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă.

Акара туртăм вăйĕ пысăк вырăн йышăнать. Лашасене Ямщиковпа Соловьев юлташсем аван пăхаççĕ. Вĕсем пăхакан лашасем самăр тата яланах таса.

Лашасене чунсăррăн пăхаççĕ

Тăвай районĕнчи Чӳтейри «Хурçă» колхоз кăçалхи хĕле калама çук япăх хатĕрленсе кĕтсе илчĕ. Пăрусем валли ăшă вите туса пĕтерейменнипе, лаша витисене те юсаман, сысна витисене юр хĕвсе тултарать. Лаша витин кантăкĕсем ванса пĕтнĕ. Кашни лаша валли уйрăм карта çук, витери лашасем тапăçаççĕ, пĕрне-пĕри апат çиме памаççĕ. Лашасем валли таканасем çук, апатсене урайне пăрахаççĕ. Çапла вара тем тĕрлĕ паха апат сая каять.

Çак çитменлĕхсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре калама çук чăрмантараççĕ. Кăçал колхозăн 17 пăрăвĕ, пĕр ĕне, 5 сысна, 15 лаша вилнĕ. Чăх-чĕпсене те йĕркеллĕн пăхмаççĕ, кăçалхи çул кăна 132 чăх вилсе пĕтнĕ.

Колхоз председателĕ Е. Васильев юлташ çак çитменлĕхсене пĕтерес пирки нимĕн те тумасть, выльăх-чĕрлĕх çине чунсăррăн пăхать. Васильев юлташ колхоза çапла юхăнтарса янишĕн колхоз членĕсем ытла та тарăхаççĕ. «Хурçă» колхозра выльăхсем çине çапла чунсăр пăхни çинчен райçĕрĕç пайĕнче ĕçлекенсем те пĕлеççĕ, анчах Васильева ответ тыттарма шутламаççĕ-ха.

А. ИВАНОВ.

Ферма лайăх ĕçлет

Шăхасан районĕнчи Уйкас Кипекри Тельман ячĕпе тăракан колхозра выльăхсен 4 ферми пур. Колхозра фермăсенче ĕçлеме чи лайăх çынсене уйăрнă. Акă, сăмахран, сурăх пăхакан Мария Иванова юлташ выльăхсене лайăх пăхнăшăн 300 тенкĕ премин илме тивĕçлĕ пулчĕ. Фермăра стахановла ĕçленĕшĕн М. Иванова, Е. Ананьева, П. Павлова, П. Терентьева юлташсене ĕçшĕн хушса тӳлес йĕркепе сĕт, çу, путексем тата сысна çурисем панă.

Иртнĕ çул сурăх ферминче планпа 110 путек çитĕнтермелле пулнă пулсан, 114 путек çитĕнтернĕ, пĕри те вилмен.

Государство умĕнчи пур обязательствăсене те колхоз срокчен парса татнă. 1944 çулшăн 21 центнер аш-какай, 64 килограмм çу панă.

Фронтовиксен çемьисене тата эвакуаци йĕркипе килнĕ çемьесене 93 пуç сысна çури сутнă, алса ăшĕсем тата çăм чăлхасем тума 2 центнер çăм парса пулăшнă.

Фермăсен заведующийĕ Ф. Тихонов юлташ ертсе пынипе, колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пĕтĕмпех пурнăçланă.

Фермăра ĕçлекенсем çамрăк выльăхсене пурне те лайăх пăхса çитĕнтерессишĕн кĕрешеççĕ

А. ЕФИМОВ.

Колхоз çамрăкĕсем, йĕлтĕрлĕ ăмăртăва хутшăнар!

ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕ йышăннă тăрăх, кăçал колхоз çамрăкĕсен йĕлтĕрлĕ ăмăртăвĕ пулса иртет. Ăмăрту малтан колхозсенче (январĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа февралĕн 5-мĕшĕччен), унтан районсенче (февралĕн 15-мĕшĕччен) пулса иртет. Çак ăмăртусенче мала тухнă командăсем республикăри ăмăртăва хутшăнаççĕ. Республикări ăмăрту февралĕн 18-мĕшĕнчен пуçласа мартăн 1-мĕшне çитиччен пырать. Çак ăмăртура арçынсен 5 километра, хĕрарăмсен 3 километра йĕлтĕрпе чупса тухмалла.

Ăмăртăва лайăх ирттерес тесен, малтан çакăн пек тренировкăллă занятисем туса ирттермелле: 1-мĕш занятире туясемсĕр, пĕр васкамасăр, 40—50 минут хушши йĕлтĕрпе çӳремелле. 2-мĕш занятире—туясемсĕр 15—20 минут хушши йĕлтĕрпе çӳренĕ хыççăн 30—35 минут туясемпе вăрăм утăмсем туса ярăнса çӳремелле. 15—20 минут хушши сăртсем çинчен ярăнма хăнăхмалла. 3-мĕш занятире 10—15 минут хушши йĕлтĕрпе хăвăрт çӳреме хăнăхмалла, арçынсен—3 километра, хĕрарăмсем 2—3 километра васкамасăр, пĕр пек хăвăртлăхпа чупса тухмалла. Сăртсем çинчен анса хăпарма вĕренмелле. 4-мĕш занятире 15—20 минут хушши васкамасăр ярăнса çӳремелле, 10—15 минут хушшинче гранатăсем ывăтма, унтан арçынсен 4—5 километра (малтанхи километра васкамасăр, иккĕмĕшне—васкавлăн, виççĕмĕшне—васкамасăр, тăваттăмĕшне—васкавлăн, пиллĕкмĕш километра каллех васкамасăр) тата хĕрарăмсен çӳлте асăннă хăвăртлăхсемпе 3 километра чупса тухмалла. 5-мĕш занятире пĕр васкамасăр 10—15 минут хушши йĕлтĕрпе çӳремелле, 10—15 минут хушши гранатăсем ывăтмалла. Унтан арçынсен 4—5 километра, хĕрарăмсен 3 километра пĕр-пек хăвăртлăхпа чупса тухмалла. 6-мĕш занятире 10—15 минут хушши йĕлтĕрпе çӳремелле. Унтан йĕлтĕре урăран вĕçертсе, 10—15 минут хушши хырăмпа шума вĕренмелле. 7-мĕш занятире 10—15 минут хушши йĕлтĕрпе çӳренĕ хыççăн гранатăсене вырăнтан тата çӳренĕ çĕртен инçене пеме хăнăхмалла. Ун хыççăн 4-мĕш занятире ирттернĕ тренировкăна тепĕр хут тумалла. 8-мĕш занятире ăша пулса çитиччен йĕлтĕрпе çӳремелле. Окоп çине гранатăсене тĕл пеме хăнăхмалла. Арçынсен 4 километра, хĕрарăмсен 2 километра кайса килмелле. 9-мĕш занятире арçынсен 5—6 километра, хĕрарăмсен 3—4 километра хăвăрттăн чупса тухмалла. Çакăн чухне çур дистанцие çитсен, пĕр километр хушши вăй çитнĕ таран хытă каймалла. 10-мĕш занятире—арçынсен 4—5 километра, хĕрарăмсен 2—3 километра, уçăлса çӳренĕ чухнехи пек, васкамасăр чупса тухмалла.

Çакăн пек занятисене эрнере 2—3 хутран кая мар ирттермелле.

Йĕлтĕрпе çӳренĕ чухне противогаза сулахай енне, граната сумкине—сылтăм енне çакмалла. Чупнă чухне чăрмантарасран вĕсене пилĕкрен çыхса çирĕплетмелле.

Судьясен коллегийĕнче главнăй судья, дистанци начальникĕ, стартри тата финишри судьясем, дистанци çинче тĕрĕслесе тăракансем тата секретарь пулмалла. Унта лайăх пĕлекен çынсене суйламалла.

Колхоз çамрăкĕсен ăмăртăвне лайăх ирттерме вырăнсенче куçса çӳрекен йĕлтĕр базисем организацилемелле. Çав базăсенче юсавлă йĕлтĕрсемпе пĕрлех запаслă инвентарь те пулмалла. Йĕлтĕрсене вырăнсене куçарнă чухне 5—10-шар мăшăррăн пĕрле çыхса хумалла.

А. ВАСИЛЬЕВ.

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи физкультурăпа спорт ĕçĕсен комитечĕн председателĕн заместителĕ.

Вăрçă хирĕнчен килнĕ çыру

Юншăн—юн, вилĕмшĕн—вилĕм

Пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар, нимĕçсен фашистла çарне хĕссе пырса, кунран кун малалла, хĕвеланăçнелле куçса пырать. Ял хыççăн ял, хула хыççăн хула йышăнса илет. Тăшман чакать. Вăл пирĕн çĕршывăн хулисене арката-арката хăварать, ялсене çунтара-çунтара ярать. Хулана пырса кĕретĕн—чул купи çеç, яла пырса кĕретĕн—ял вырăнĕнче хуп-хура кăмрăк

Эпир вăрманпа пыратпăр.

— Бу-ух!—турĕ пирĕн умра. Хура тĕтĕм сывлăшалла çĕкленчĕ. Пирĕн малта пыракан машина мина çине пырса кĕнĕ иккен. Пысăк инкек. Çунат çинче тăрса пыракан Алексеев старши лейтенанта мина ванчăкĕсем вĕлернĕ.

— Қаçармастпăр куншăн, каçармастпăр! Юншăн—юн, вилĕмшĕн—вилĕм! Пĕр вырăс офицерĕшĕн çĕр нимĕç салтакĕпе офицерне пĕтеретпĕр!—терĕç машина синче ларса пыракан боецсем.

* * *

— Аçта санинструктор?—ыйтать манран Клабуков сержант.

— Сана амантрĕç-и мĕн?

— Амантрĕç, ытла аптăрамаллах мар, эпĕ çапăçма пултаратăп.

Ана кăкăртан амантнă иккен. Эпĕ ăна санинструктор ăçтине каласа патăм. Суранне çыхсан, Клабуков калех хăйĕн вырăнне таврăнчĕ.

Вовченко старши сержанта пуçран амантнă, апла пулин те вăл вăрçă хирĕнчен тухмарĕ.

— Уровень 30—00, прицел 84!—команда пачĕ Смоляков майор.

— Хатĕр!—илтĕнчĕç сасăсем.

— Юншăн—юн, вилĕмшĕн — вилĕм! Пли-и!

Кĕр-рĕст! — кĕрĕслетрĕ тăхăр тупă пĕр харăс. Тăхăр стре тăшман çинелле чăшкăрса вĕçсе кайрĕ.

— Аван, аван,—тет подполковник Ушаков телефон тăрăх.

— Юншăн—юн, вилĕмшĕн — вилĕм! Пли-и!

Кĕр-рĕст! кĕрĕслетрĕ тăхăр тупă пĕр харăс. Çĕр кисренсе кайрĕ. Тăшманăн çар хатĕрĕсем сывлăшалла сирпĕнчĕç. Салтакĕсемпе офицерĕсем нумай пĕтрĕç. Тăшмана аркатса тăкрăмăр. Хыçранах малалла хăваласа пыратпăр.

М. ЗАХАРОВ.

Ялхуçалăх артелĕн Сталинла уставне пĕр пăркаланмасăр пурнăçласа пымалла

Отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче ялхуçалăх артелĕн Сталинла уставĕн пĕлтерĕшĕ татах та ӳсрĕ. Устава яланах çирĕп тытса пырса, пирĕн колхозсем хăйсен мĕнпур ĕçĕсене вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек урăхлатса çĕнетрĕç. Вĕсем вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене çирĕппĕн тӳссе ирттереççĕ. Колхозсемпе колхозниксем пирĕн Хĕрлĕ Çарпа фронта çителĕклĕ таран апат-çимĕç, промышленность валли чĕртавар парса тăраççĕ.

Уйкас Кипекри Тельман ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ коммунист Ф. Тихонов юлташ) ялхуçалăх уставне тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пырать, çапла вара колхоз хăйĕн тата колхозниксен хуçалăхĕсене тĕреклетме май туса пачĕ.

Кунта тырпул тухăçлăхне çулсеренех ӳстерсе пыраççĕ, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе ăнăçлăн аталантараççĕ.

Агротехника кăтартăвĕсене тĕрĕс пурнăçласа пынине пула, колхоз çулсеренех пысăк тухăçлă тырпул туса илет. 1943 çулта колхоз уйрăм участоксенче гектартан 100-шер пăт ытла тĕштырă пухса илчĕ. Çапла вара колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх валеççе памалăх та, çĕршывпа фронта пулăшса тăмалăх та тырпул пулчĕ.

Колхоз çитес çуракине хĕрӳллĕн хатĕрленет. Кирлĕ вăрлăхсене пĕтĕмĕшпех уйăрса, сортласа хунă, ялхуçалăх машинисене юсаса лартнă. Кĕске вăхăт хушшинче уя 2740 лав тислĕк кăларнă, вырăнти удобренисем нумай пухса хатĕрленĕ. Кунта общественнăй пурлăха çирĕп сыхлаççĕ, лашасене аван пăхаççĕ. Лашасем валли çителĕклĕ таран кӳлмелли хатĕрсем пур, вĕсене яланах юсавлă тытаççĕ.

Атнашри Киров ячĕпе тăракан, Шуркассинчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсенче те Сталинла устава тимлĕн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Ку колхозсенчи колхозниксемпе колхозницăсем, ялхуçалăх уставĕнче кăтартса панисене çирĕп тытса пырса, колхозра ĕç дисциплинине çирĕплетрĕç. Çапла майпа колхозăн та, колхозниксен те пурлăхĕ ӳсет. Ку тĕслĕхе çакă та аван кăтартса парать. Киров ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ коммунистка В. Степанова юлташ) государствăна 6000 пăт тырă сутрĕ, кунсăр пуçне колхозниксем хăйсен запасĕсенчен 1000 пăт ытла сутрĕç. Ухманти «Победа» колхозăн унан членĕсем государствăна 15.400 пăт тырă сутрĕç. «Красное Сормово» колхоз председателе К. Виссарионов юлташ — 90 пăт сутрĕ.

Çак колхозсем çитес çуракине питех те тĕплĕн хатĕрленме тытăнчĕç, вăйлă тырпулшăн кĕрешĕве анлăн сарса пыраççĕ.

Анчах пур колхозсенче те ялхуçалăх артелĕн уставне тивĕçлипе пурнăçласа пымаççĕ-ха. Хăшпĕр колхозсенче устава пăхăнмасăр, тĕрĕс мар ĕçсем тăваççĕ, колхоз хуçалăхĕ çине хуçасăрла пăхаççĕ. Туçи Чуракассинчи «Правда» колхозра 6 уйăх ĕнтĕ колхозниксен пухăвĕ пулман. Колхоз председателĕ С. Иванов ялхуçалăх артелĕн уставне хăй пăсса пырать. Колхозниксен пухăвĕсĕрех, вăл хăйĕн ĕнин пăрушне колхоз фермингчи сăвакан ĕнепе улăштарнă. Çакă вăл колхозниксене кӳрентерет. Колхозăн ялхуçалăх машинисем ăçта килчĕ унта выртаççĕ. Кĕрхи çĕртме тунăранпа плугсене пухса тасатса хуман. Паянхи куна çитсе те колхоз çуракине хатĕрленме тытăнман. Агротехника кăтартăвĕсене çулсеренех пурнăçласа пыманнине пула, колхоз начар тырпул туса илет.

Матьшӳри „Молодой колхозник" колхозра та ялхуçалăх артелĕн уставне чылай пăсаççĕ. Кунта колхозниксен пухăвĕсем 3—4 уйăх ĕнтĕ пулман. Колхозри питех те кирлĕ ыйтусене, колхозниксен пухăвĕнче сӳтсе-явма тивĕçлĕскерсене, колхоз председателĕ П. Николаев хăй тĕллĕнех татса парать. Вăл колхоз пурлăхне, ĕçкунĕсене тĕрĕс мар расходлать. Колхоз председателĕн заместителĕ Н. Павлов икĕ лаша сутнă, укçисене ку тарана çитсе те кассăна хывман. Авăн çапса пĕтернĕренпе тырă хунă 3 амбара питĕрмесĕр тăратаççĕ. Çапнă тырра амбарсене виçесĕр кĕртнине пула, тепĕр хут виççе пăхнă хыççăн 880 пăт ыраш ытлашши тухнă. Колхоз счетоводĕ Г. Львов документсене арпаштарса пĕтернĕ. 1941 çулта колхозăн 21 вĕлле пыл хурчĕ пулнă пулсан, халĕ 7 вĕлле çеç юлнă, ыттисем пĕтнĕ.

Кунта, ялхуçалăх машинисемпе транспорт инвентарĕсем çине хуçасăрла пăхнине пула, паянхи куна çитсе те плугсене пĕр çĕре пухса тасатса хуман, колхозăн икĕ сеялки çырмара юр айĕнче выртать. Вĕсене юсаттарасси çинчен шутламаççĕ. Кашни бригадăра 10-шар лаша пур. Лашасене кӳлме кашни бригадăра виçшер урапа, 3—4 хăмăт çеç. Колхоза ертсе пыракансем çакăн пек япăх ĕçленишĕн колхозниксем хытă тарăхаççĕ.

Райçĕрĕç пайĕ (заведующийĕ Белорусов) ялхуçалăх артелĕн уставне пăсакансемпе тивĕçлипе кĕрешмест. Асăннă колхозсенче Белорусов юлташ хăй те сахал мар пулнă, анчах çак пысăк çитменлĕхсене пĕтерес тесе нимĕн те туман. Районри прокурорăн Силантьев юлташăн çак фактсем çине çавăрăса пăхмалла.

Сталинла устава кашни колхозăн, колхозникĕн тĕплĕн те пĕр пăркаланмасăр пурнăçласа пымалла, устава пăсакансене çирĕп ответ тыттармалла.

В. ВЕСЕЛОВ.
(„Чăваш Коммуни" корр).

Ют çĕршывсенче

ИТАЛИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, январĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: икĕ кун хушши урамсенче хаяррăн çапăçнă хыççăн 5-мĕш армин Америка чаçĕсем Сан-Витторе хулине йышăнса илнĕ. Халь малалла наступлени туса пыраççĕ. Тепĕр районра союзниксен çарĕсем 4.000 фут çӳллĕш тусен ушкăнĕнчи пĕр ту патне татса кĕнĕ те ăна йышăнса илнĕ. 10 миля сарлакĕш фронтра малалла наступлени туса пыраççĕ.

Англин 8-мĕш армийĕн фронтĕнче вăйлă дозорсем хаяррăн тытăçса илнĕ.

Январĕн 7-мĕшĕнче союзниксен авиацийĕн йывăр бомбардировщикĕсем истребительсем хӳтĕлесе пынипе Мариборти (Югославин Çурçĕр пайĕнчи, Австри чикки патĕнчи) самолетсем тăвакан завода тата Фиумри (Адриатика тинĕсĕн çурçĕр çыранĕ патĕнчи) сортировка станцине атакăланă.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн Вăтаçĕр Италири çыхăнăвĕсене тапăннă.

ÇУРÇĔР ИТАЛИРЕ ГИТЛЕРЛА ОККУПАНТСЕМПЕ КĔРЕШНИ

СТАМБУЛ, январĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта илнĕ хыпарсем тăрăх, Çурçĕр Италири халăх гитлерла оккупантсемпе тата вĕсене пулăшса тăракан итальянецсемпе кĕрешет. Декабрь уйăхĕ вĕçĕнче Миланри машинăсем тăвакан заводăн темиçе цехĕнче 29 станока юрăхсăра кăларнă. Çакă вара гитлерла командованин декабрь уйăхĕнчи заданине пурнăçлама паман. Болоньяра такамсем Германин çар склачĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Болоньяри гестапон начальникĕ халăх çине питĕ пысăк контрибуци хунă, Венецире лару-тăру питĕ çивĕчленсе кайнă. Çавна пула Германин Венецири гарнизонĕн начальникĕ хулана кĕме те, хуларан тухма та чарнă. Çапла майпа вăл хула халăхне Венеци районĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕсемпе çыхăнма кансĕрлеме шутланă.

Çурçĕр Италире Германин хăйне уйрăм 50 сучĕ ĕçлет ĕнтĕ. Вĕсем саботажпа диверси ĕçĕсене тата Германие хирĕç тăвакан выступленисен ĕçĕсене пăхса тухаççĕ.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, январĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: январĕн 7-мĕшĕнче Америка бомбардировщикĕсен шултăра вăйĕсем кăнтăр-хĕвеланăç Германири тĕрлĕ объектсене атакăланă. Америкăн, Англин тата союзниксен сыхлăш-çар вăйĕсен истребителĕсем бомбардировщиксене пулăшса пынă. Америкăн инçене вĕçекен истребителĕсем Кăнтăр-хĕвеланăç Германири промышленноçлă районсене нумай шала кĕрсе кайнă. Германи авиацийĕ вĕсене хирĕç тăман.

Январĕн 7-мĕшĕнче нимĕçсен 42 истребительне персе ӳкернĕ. Союзниксен 19 самолечĕ хăйсен базисене таврăнман.

ЮГОСЛАВИРИ ХАЛĂХА ИРĔКЕ КĂЛАРАССИШĔН КĔРЕШЕКЕН ÇАРĂН ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЖЕНЕВА, январĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен илнĕ хыпарсем тăрăх, Банья-Лука хулинче халь те çапăçусем пыраççĕ. Гитлеровецсем питĕ хаяр хирĕç тăраççĕ, анчах та вĕсене пĕр çурт хыççăн тепринчен хĕсе-хĕсе кăлараççĕ. Хĕвелтухăç Боснире вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çарăн чаçĕсем хăшпĕр тĕлте контрнаступлени тăваççĕ. Динар Альписем çинче халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ. Халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çарăн пĕр дивизийĕ Цетинье шывĕн улăхне оккупантсенчен, усташсенчен тата четниксенчен пĕтĕмĕшпех тасатнă. Славонире партизансен отрячĕсем Белградпа Загреб хушшинчи чугун çула темиçе тĕлте пăснă. Çав çулпа вара пĕр талăк хушши çӳреймен. Çав чугун çул çинчех халăх çарĕн пĕр чаçĕ Германин бронепоездне çĕмĕрнĕ, пĕр паровоз тата 7 вагон пĕтнĕ.

ЖЕНЕВА, январĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен пĕлтернĕ тăрăх, Банья-Лука — Приедор секторĕнче çапăçусем пыраççĕ. Вăтаçĕр Боснире Германин шултăра вăйĕсем халăх çарĕ ирĕке кăларнă территорие кĕрсе кайма тăрăшаççĕ, унта халь вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Санджакра халăх çарĕн чаçĕсем территорие гитлеровецсемпе четниксенчен тасатса пыраççĕ. Динар Альписем çинче, Дальмацире халăх çарĕн чаçĕсем наступлени тăваççĕ. Герцеговинăра, Требинепе Билече хушшинчи çул çинче халăх çарĕн чаçĕсем тăшман колоннине аркатса тăкнă. Хĕçпăшал тата çар пурлăхĕ нумай тытса илнĕ.

ХĔÇПĂШАЛА КИВÇĔН ТАТА АРЕНДА ЙĔРКИПЕ ПАМАЛЛИ ЗАКОНА ПУРНĂÇЛАНИ ÇИНЧЕН РУЗВЕЛЬТ ПАНĂ ОТЧЕТ

ВАШИНГТОН, январĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Хĕçпăшала кивçен е аренда йĕркипе памалли закона 1943 çулхи ноябрĕн 30-мĕшĕччен мĕнле пурнăçлани çинчен Рузвельт конгреса вун виççĕмĕш отчет тăратнă. Хăйĕн посланийĕнче Рузвельт çапла калать: 1944 çулта ĕçе татса памалли операцисем пулаççĕ, тет. Каиртипе Тегеранри конференцисенче унччен хинчен тачăрах пĕрлĕх тунă, çав пĕрлĕх союзниксене хăйсен наступленине тăшмана пĕр сăмахсăрах парăнтаричченех вăйлатса пыма май парать.

Отчетра хĕçпăшала кивçен е аренда йĕркипе памалли закон тăрăх юлашки уйăхсенче хĕçпăшал нумай ытларах тăратни çинчен каланă: 1941 çулхи мартран пуçласа 1943 çулхи ноябрĕн 30-мĕшĕччен çав закон тăрăх панă таварсен тата пулăшăвăн хакĕ 18 миллиард доллартан иртнĕ. Çав шутран 10 миллиард долларлăх ытла 1943 çулăн малтанхи вунпĕр уйăхĕ хушшинче, 7 миллиард долларлăх—1942 çулта панă. Панă таварсене çеç илсен, вĕсен хакĕ 13 миллиард доллартан иртнĕ, çав шутран 8 миллиард долларлăх ытла 1943 çулăн малтанхи вунпĕр уйăхĕнче, 5 миллиардран каярах—1942 çулта панă.

Хĕçпăшала кивçен е аренда йĕркипе памалли закон тăрăх Совет Союзне пурĕ 3,5 миллиард долларлăх ытла тавар панă.

ФРАНЦИ ХАЛĂХНЕ ИРĔКЕ КĂЛАРАССИШĔН КĔРЕШЕКЕН КОМИТЕТĂН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, январĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Франци халăхне ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен комитет хăйĕн январĕн 6-мĕшĕнче де-Голль председатель пулса ертсе пынă ларăвĕнче французсен экспедициллĕ çарĕсене тата вĕсен командованине организацилемелли çинчен декрет кăларнă. Çынсене çара илесси çинчен калакан декретсене çирĕплетнĕ. Комитет Браззавильре январĕн 13-мĕшĕнче Африкăри колонисен ыйтăвĕсемпе пухăнакан конференцин программине ырланă, вăл программăна колонисен комиссарĕ Плевен тăратнă.

ЛĂПКА ОКЕАН ÇИНЧИ ВĂРÇĂ

ЛОНДОН, январĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнче кĕрешекен союзниксен хĕçпăшаллă вăйĕсен пĕрлешӳллĕ командованийĕн штабĕ çапла пĕлтерет: Çĕнĕ Британи утравĕн Глоустер ятлă сăмсахĕ çинче хаяррăн çапăçаççĕ. Япони çарĕсен ĕнер кăна 600 çын вилнĕ. Союзниксен çарĕсем çав сăмсах çине пырса аннăранпа—декабрĕн 26-мĕшĕнчен пуçласа—Японин унта 2.000 çын ытла пĕтнĕ.

Союзниксен Çĕнĕ Гвинейăри Сайдорăна пырса аннă çарĕсем Мадангăран 10 мильăри районра Япони çарĕсен чаçĕсене тĕл пулнă.

Бургенвиль утравĕн Императрица Августа ятлă бухтинче союзниксен çарĕсен малти чаçĕсем японецсемпе Торокина шывĕнчен хĕвелтухăçнерехре çапăçаççĕ.

Рабаула тапăнна чухне союзниксен авиацийĕ Японин 10 самолетне персе ӳкернĕ. Çав районра декабрĕн 24-мĕшĕнчен пуçласа Японин мĕн пурĕ 180 самолет ытла пĕтнĕ.

Тимор утравĕ çинчи Купанга патĕнче союзниксен самолечĕсем Японин 2 суднине вут тивертнĕ, виççĕмĕш суднине Çĕнĕ Гвинея патĕнче путарнă.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

ШУПАШКАРТИ РАДИОТОЧКĂСЕМПЕ УСĂ КУРАКАН ОРГАНИЗАЦИСЕМПЕ УЧРЕЖДЕНИСЕНЕ, ПРЕДПРИЯТИСЕНЕ ТАТА ГРАЖДĂНСЕНЕ ПĔЛСЕ ТĂМА:

Радиоточкăсене тепĕр хут çыртарасси 1944 çулхи январĕн 12-мĕшĕнче вĕçленет.

Радиоточкăсен хуçисен 1944 çулта радиоточкăпа усă курма право илни çинчен кивĕ удостоверени çине паллă тутарас пулать е çĕнĕ удостоверени илес пулать.

Радиоточкăсене радиоузел кассинче кашни кун ирхине 8 сехетрен пуçласа каçхине 8 сехетчен çыраççĕ.

Январĕн 15-мĕшĕ иртсен, пырса çыртарман радиоточкăсене каялла илеççĕ.

РАДИОУЗЕЛ ДИРЕКЦИЙĔ.

Чăвашпромсоюза план отделĕнче ĕçлеме çакăн пек çынсем кирлĕ: план отделĕн заведующийĕн учетпа отчетность тĕлĕшпе ĕçлекен заместителĕ, ĕç ыйтăвĕсемпе ĕçлекен экономист тата экономист-конъюнктурист. Çав ĕçсене ĕçлепĕ хушăра вĕренес тесен, çав специальноçсемпе ĕçлемен çынсене те илме пултараççĕ. Анчах ĕçлеме кĕрекенсен вăтам шкулăн 7—10-мĕш класĕсенчен вĕренсе тухнисем чухлĕ пĕлмелле.

Ĕçе ученик шучĕпе кĕрес текенсене те илме пултараççĕ.

Общи отдела машинистка кирлĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Ленина, 5 (во дворе, 2-й этаж).

РЕДАКЦИ АДРЕСЕ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, секретарьпе заместителĕн — 4—26, парти пурнăс пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00315 Типографи №1, Управлени полиграфпромышленноçти при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59×42 п. л. Тираж 14.400 экз.